к84.09(=Чув)
Л 37
Ч-48808

Ульяна Левукова
Владимир Левуков

# ПУРНĂÇ ЮРРИСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-048808

Ульяна Левукова

Владимир Левуков

# ПУРНĂÇ ЮРРИСЕМ

Тольятти 2016

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос–Чув)–4
Л 34 Левуков В. Л. ПУРНĂÇ ЮРРИСЕМ, 2016 г., ООО типография «Форум», 64 стр.

Кĕнекен пĕрремĕш пайĕнче, 92 çула çывхарса пыракан ЛЕВУКОВА УЛЬЯНА СЕРГЕЕВНĂН нумай çул хушши çырса пынă хăйне евĕрлĕ «Сăвă ярăмĕсене» тата «Пурнăç юррисене» кĕртнĕ. Тутарстанри Аксу районĕнчи Кивĕ Тимушкел ялĕнче çуралнă Ульянăн яш-çамрăклăхĕ кӳршĕри Шурьялта (Беловкăра) иртнĕ. Унта чăвашсен 1-мĕш халăх поэчĕ Николай Иванович Полоруссов-Шелепипе пĕр касрах пурăннă. Килĕ умĕнчи сак çинче сăвăсем каласа, юрăсем юрласа ларакан Шелепие 6-7 çулхи хĕрача пĕрре мар илтнĕ. Ульяна та, паллă сăвăç пек, сăвăсем çырма ĕмĕтленнĕ, анчах йывăр та нушаллă пурнăç унăн шухăш-ĕмĕтне Сĕнчен çурхи пăтранчăк шывĕпе инçете-инçете, нумайлăха юхтарса янă. Çумри мăшăрĕ çĕре кĕрсен, 8 ачи те мăшăрланса тăван килтен тухса кайсан, тивĕçлĕ канури Ульяна Сергеевна тинех пуçĕнче капланса пухăннă шухăшĕсене шурă хут çине çырса пыма пуçланă.

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче ВЛАДИМИР ЛЕВУКОВĂН тĕрлĕ çулсенче çырса пынă амăшĕ юрлакан юрăсене тата Тутарстанри Кивĕ Тимушкел (Аксу районĕ) чăвашĕсем юрлакан уяв, туй тата çăварни юррисене кĕртнĕ.

Ч-48808

Национальная библиотека
Чувашской Республики

Проверено 9 СЕН 2017

© Владимир Левуков, 2016



Çак шăрçа пек сăвă ярăмĕсене çырса пухаканĕ ЛЕВУКОВА УЛЬЯНА СЕРГЕЕВНА. Вăл – манăн анне, 1925- мĕш çулта, çуллахи Микула кунĕ умĕн (çу уйăхĕн 21- мĕшĕнче) Тутарстанри Аксу районĕнчи Кивĕ Тимушкел ялĕнче çуралнă, анчах ачалăхĕ, яш-çамрăклăхĕ çуралнă ялтан икĕ çухрăмри Шурьялта (Беловкăра) иртнĕ. Ачаранах унăн пурнăçĕ йывăр пулнă. Питĕ чухăн та нумай ачаллă хресчен çемйинче ӳснĕ. Тăхăнмалли пулман, çимелли çитмен, уйрăмах, тăвар пулман. Кукамайăн çемйинче ачасенчен нумайăшĕ выçлăхпа вилнĕ, кукаçи те шăнса пăсăлнă хыççăн ура çине тăрайман, çĕре кĕнĕ. Анне паян кун та куççуль витĕр каласа парать çав ĕмĕрлĕхех асран кайман вăхăтсем çинчен. Пултăран, вĕлтĕрен яшки çини çинчен; кукамай, Чистая кайса, пурлă-çуклă хăйĕн тата ачисен тăхăнмалли тумтирĕсене тăварпа ылмаштарса килнине; çавăн пирки пурте çын çине тухмалли çи-пуççăр тăрса юлнине; епле

вăл ялти хăшпĕр ытлă-çитлĕ пурăнакан çынсем патĕнче тара кĕрсе ĕçленине; шăнса крахмал пулнă çĕр улмишĕн, кĕреçепе пĕтĕм пахчине чавса панине... Çакăн пек пурнăçа тӳссе ирттерме мар, кăмăлтан пăлханмасăр итлеме те вăй-хăват çитерес çук. Хĕр пуçăн та выляса-кулса çӳреме вăхăчĕ пулман унăн, яшлăхĕ вăрçă саманине тӳр килнĕ.

1949-мĕш çулта Кивĕ Тимушкеле, вăрçăран сусăрланса таврăннă Левуков Леонтий Никоновича качча тухнă. Пире, тăхăр ачана çуратса, саккăрăшне (пĕр йăмăкăм, Валя ятлăскер, çулталăк тултараймасăрах шăнса чирлерĕ те çĕре кĕчĕ) 1-мĕш ушкăнри инвалид аттепе пĕрле ӳстерсе çитĕнтереççĕ, çын шутне кĕртеççĕ. Мăнтарăн аннеçĕме сакăр ачана пăхса çитĕнтерме (тата инвалид аттене те юрамалла) мĕн чухлĕ чăтăм, вăй-хăват кирлĕ пулнă-ши? Кăна хăй тата çӳлти Турă кăна пĕлеççĕ. Аннепе атте пулăшнипе тата хамăр тăрăшнипе эпĕ, чи асли, тата кĕçĕн йăмăкăм, Тамара, аслă пĕлӳ туянма тивĕçлĕ пултăмăр, ытти шăллăмсемпе йăмăксем те, пурте тенĕ пекех, вăтам шкултан вĕренсе тухрĕç, хăйсене килĕшекен специальность туянса пенсие тухиччен ĕçлерĕç. Нумайăшĕ эпир халь тивĕçлĕ канура.

Атте 62-рех 1987-мĕш çулта çут тĕнчерен яланлăхах уйрăлса кайрĕ, унтанпа пирĕн анне тăван килте пĕччен нумай çул пурăнчĕ. Эпир, унăн ачисем, çывăхрисем те, инçетре пурăнаканнисем те, паллах, тăтăшах пулаттăмăрччĕ анне патĕнче, çанталăк хĕл енне сулăнсанах хамăр пата хĕл каçма та илсе каяттăмăрччĕ, анчах вăл тăван кил вучахне сӳнме парас темерĕ ун чухне, никам патне те тĕппипех хăпса тухса каймарĕ. Мункун çывхараспа яланах тăван киле таврăнас шухăшлăччĕ. Тавтапуç аннене нумай çул хушши тăван кил ăшшине тытса тăнăшăн.

Пирĕн анне, Левукова Ульяна Сергеевна, мухтав Турра, халь те сывă. Юлашки çулсенче вăл каллех ачалăхĕ-çамрăклăхĕ иртнĕ Беловка ялĕнче пурăнма пуçларĕ. Çулсене кура хавшакланнă аннеçĕме çак ялта пурăнакан йăмăкăм Тамара тата

Витя кĕрӳ Андреевсем хăйсен хӳтлĕхне илчĕç. Кăмăлтан юратса ăна пăхнăран, яланах унпа тимлĕ пулнăран, пирĕн аннен сывлăхĕ пайтах лайăхланчĕ, чиперех 92 çула çывхарса пырать. Йăмăкпа унăн мăшăрĕ тата вĕсен ачисем умĕнче çĕре çити пуç таяс килет.



Тамарăпа Витя Андреевсем

2015 çулта хăйĕн 90 çул тултарнă юбилейне палăртрĕ аннеçĕм. Йăмăкăн çемйи, Андреевсем, питĕ аван хатĕрленчĕç çак савăнăçлă куна палăртма. Таймапуç вĕсене! Аннене саламлама чи çывăх çыннисем: ачисем, мăнукĕсем, мăнукĕсен ачисем, ытти тăванĕсем пурте тенĕ пекех пухăнчĕç. Эпĕ Зинаида мăшăрăмпа аннене халалланă юрăсем юрларăмăр, Тамара йăмăкăм баянпа килнĕ хăнасене юрлаттарчĕ, унăн хĕрĕ Виктори те хăйĕн илемлĕ юррисемпе кукамăшне савăнтарчĕ. Анне хăй те чăтса тăраймарĕ – юрă хыççăн юрă пуçласа юрларĕ.

Аксу район администрацийĕ, вырăнти ял-хуçалăх пуçлăхĕ, районри «Ял пурнăçĕ» хаçат корреспонденчĕ аннене чысласа Хисеп хучĕсем, парнесем пачĕç. Уйрăмах, Раççей президенчĕн çырăвĕ аннене хумхантарчĕ. «Çак çула çитсе çакăн пек пысăк чыс куртăм. Путин та мана саламларĕ. Чи çывăх çынсем куç умĕнче. Кун пек хавхаланупа тата 10 çул ним мар пурăнатăп-ха! Тамара хĕрĕмпе кĕрӳ питĕ лайăх пăхаççĕ, мĕншĕн пурăнмалла мар!»– терĕ анне тулли сĕтел тавра ларса тухнă

хӑнасене, тӑванӗсене тав тунӑ хыҫҫӑн. «Пурне те пехил манран!» - терӗ юлашкинчен. Ватӑ ҫын пехилӗ ӗмӗре, теҫҫӗ чӑвашсем. Аннен пехилӗпе пурӑнасчӗ-ха малашне те.

Анне, ҫак ҫула ҫитсен те, куҫлӑхсӑрах кӗнекесем, хаҫатсем вулать. Президентран килнӗ хаклӑ салам ҫыруне кашни кун вуласа савӑнать. Аксу районӗнче тухса тӑракан «Ял пурнӑҫӗ», Хусанри «Сувар» хаҫат нумӗрӗсене тата эпӗ хам ҫырӑнса илекен Самар тата Чӑваш ен хаҫачӗсене ятарласах ун валли илсе кайсан, пӗр сӑмах сиктермесӗр, тимлӗ вуласа тухмасӑр вӑл лӑпланаймасть. Хӑй те вара ыйхине ҫухатса, каҫхи шӑплӑхра хӑйӗн шухӑшӗсене йӳле ярса, калемне вылятать. Унӑн сӑввисене вуласа эпӗ кӑна савӑнас мар терӗм, сире те, хисеплӗ вулаканӑмӑрсем, сӗнес килчӗ.

Владимир Левуков,
Раҫҫей писателӗсен союзӗн членӗ.
2016 ҫул, Тольятти хули



Анне юбилее килнӗ 5 ачи хушшинче. Сулахайран сылтӑмалла: Борис 1957 ҫ.ҫ, Галина 1964 ҫ.ҫ., Тамара 1967 ҫ.ҫ., Владимир, 1950 ҫ.ҫ., Юрий 1951 ҫ.ҫ.

Ульяна ЛЕВУКОВА

## <u>СӐВӐ ЯРӐМӖСЕМ</u>

Кашни ҫынах ҫӗр ҫинче
Телей курма ҫуралать.
Анчах пурнӑҫ аллинче
Шӑпи урӑхла вылять.

Хам пурнӑҫа шухӑшласан
Выртса макрассӑм килет.
Ачамсене ас илсессӗн
Каллех шанчӑк илӗртет.

Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр мар та,
Тунсӑх каймасть ман ҫумран.
Сивӗтмешкӗн кирлӗ мар та
Ҫывӑх ҫынна хамӑртан.

Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр мар та –
Нумай тӳсрӗм нушине.
Пирӗн ӗмӗр иккӗ мар та –
Упраймастпӑр пӗр-пӗрне.

Хура вӑрман варринче те
Кӳлнӗ утсем тӑраҫҫӗ.
Кӳлнӗ утсен хуҫи ҫук та,
Ман пуҫӑмра телей ҫук.
Ман ҫумӑмра мӑшӑр ҫук.

Сад пахчинчи сар кайӑкӗ
Юрлать тул ҫутӑлнӑ чух.
Юрлать тесе ан калӑр-ха,
Юрлатӑп ӑш ҫуннӑ чух.

Тӗлӗнетӗп ҫӗмӗртрен те
Шур чечеке ларнинчен.
Хамран хам эп тӗлӗнетӗп
Пӗччен тӑрса юлнинчен.

Атӑл хӗрне анаймарӑм,
Чей ларса ӗҫеймерӗм.
Эп телейлӗ пулаймарӑм,
Савӑнса ҫӳреймерӗм.

Атӑл хӗрне аннӑ пулсан,
Хӑпарайман пулӑттӑм.
Эп телейлӗ пулас пулсан,
Ҫуралман та пулӑттӑм.

Анне, мана ҫуратнӑ чух,
Хӗр ҫуралтӑр терӗ пуль.
Тӑхӑр ача ҫуратса та
Пӗччен юлтӑр терӗ пуль.

Ма мана ҫуратнӑ-ши те,
Ма мана ӳстернӗ-ши?
Ма мана ҫуратсанах
Уратана пемен-ши?

Анне мана ҫуратиччен
Ывӑл ҫуратмаллаччӗ.
Хӗрӗм, тесе ӳстериччен
Шывпах юхтармаллаччӗ.

Анне мана калатчӗ,
Шурӑ тутӑр ҫых, тетчӗ.
Мӗнле йывӑр пулсассӑн та,
Ҫынна ан палӑрт, тетчӗ.
Салху ан ҫӳре, тетчӗ.

Шур тутăрпа çӳресе
Пите шур сăн çапрĕ пуль.
Ӳпкелес çук аннене –
Турă çапла çырчĕ пуль.

Атте арча турĕ-турĕ,
Туса пĕтереймерĕ.
Пуçне çирĕ выçлăх мурĕ –
Арча парнелеймерĕ.

Чăтлăхра хĕвел ӳкмест.
Хурлăхан унта пиçмест.
Пасарта тем те сутаççĕ,
Анчах телей сутăнмасть.

Сывă пул, шултра вăрман,
Каяп вĕтĕ вăрмана.
Сывă пул, савниçĕм, эс –
Каяп Турă çырнине.

Эх, чул урам, чул урам!
Чула такăнтăм, куран.
Эпĕ ырлăх курасси
Чул айнех пулнă, куран.

Автобус иртсе кайрĕ,
Лараймасăр юлтăмăр.
Çамрăк ĕмĕр иртсе кайрĕ,
Ыр курмасăр юлтăмăр.

Автобусĕ пĕр хускалсан
Каять те каять иккен.
Ватă пуçăм пĕр хускалсан
Çунать те çунать иккен.

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать
Шуç виттернĕ пӳрт çине.
Шăпăр-шăпăр куççуль юхать
Умри шурă хут çине.

Ах, терĕм те макăртăм.
Мăшăр, ан макăр, терĕ.
Эп вилсен, пĕччен юлсан,
Нумай макрăн-ха, терĕ.

Мăшăр шурă перчетке,
Хăраххи кăна юлчĕ.
Çак çуртра ман вată пуç
Тăр пĕччен тăрса юлчĕ.

Уçса ярăр чӳречĕре –
Шур чĕнтĕрĕ курăнтăр.
Çырса ярăр çырăвăра –
Чĕре çунни пусрăнтăр.

Ас ил мана, ас ил мана,
Эп те ас илĕп сана.
Ас илмест тесе ан калăр,
Ас илмен самант сайра.

Улăх çине тĕтре карнă –
Кайăк вĕçни курăнмасть.
Ир пулать те каç пулать –
Ĕмĕр иртни туйăнмасть.

Куçлăх витĕр пăхса çыхма
Эпĕ хитре сăнлă мар.
Çуртра пĕччен тăлăх тесен,
Сĕм тăлăх çынах та мар.

Костюм кĕсйи иккĕ тесе
Алла чиксе çӳрес мар.
Çуртра пĕччен тăлăх тесе
Пуçа усса ларас мар.

Атя, тантăш, юрлар-ха,
Иккĕн юрлаканччĕ-ха.
Ман çунакан чĕрене
Эс пусараканччĕ-ха.

Атя, тантăш, юрлар-ха
Мĕн те пулин каласа.
Ватă пуçа ирттерес мар
Кунĕн-çĕрĕн макăрса.

Хура çӳçне тура-тура.
Хура пулсан та тура.
Пирĕн умран иртнĕ чухне
Эп çук пулсан та юрла.

Анаталла анмалла,
Тăвалла хăпармалла.
Пĕрне-пĕри хыт ан калăр,
Малалла пурăнмалла.

Ик курница хире-хирĕç,
Ун çивитти пĕр тикĕс.
Ху юратнă мăшăрупа
Ĕмĕр тытăр пĕр тикĕс.

Мăкăнь чечек, писев чечек
Хитре те час тăкăнать.
Çамрăк ĕмĕр пит хитре те,
Анчах час иртсе каять.

1987-мĕш çултан пуçласа çырса пынă



## АННЕН ПУРНĂÇ ЮРРИСЕМ

Çак юрă ярăмĕсене манăн анне, Левукова Ульяна Сергеевна, çырса пухнă. Нумайăшĕ вĕсенчен хăй çамрăк чухне илтнĕ, питĕ лайăх ас туса юлнă, хальхи хăйĕн пурнăçĕпе çыхăнтарса майлаштарнă сăвă йĕркисем. Çавăнпа та аннеçĕмĕн сăвви-юррисем хăйне евĕрлĕ. Кунта нумай ĕлĕкхи чăн чăвашран килнĕ сăмахсем, тĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулаççĕ. Хальхи хăйĕн пурнăçĕ çинчен те çутçанталăк пулăмĕсемпе вырăнлă та илемлĕ танлаштарусем тăвать. Вăл çырнă сăвăсем юрă пек. Чăннипех те, хăть хăçан та анне мана вĕсене вуласа мар, юрласа парать. Кашнинче эпĕ тимлĕ итлетĕп те шутсăр унран тĕлĕнетĕп: тăхăр теçетке вакласан та, шухăш-кăмăлĕпе çамрăк-ха, юрлама халь те хавхалансах хутшăнать. Кĕрекене ларсан, юрă пуçласа, юрласа ямасăр чăтаймасть. Унăн ăс-тăнĕ питĕ çивĕч, чăваш йăли-йĕркине пур тĕлĕшĕнчен те тĕплĕ пĕлет. Ахальтен мар, ĕнтĕ ун патне пĕрре мар чăвашлăха тĕпчекен, чăвашлăхпа кăсăкланакан паллă çынсем, ăсчахсем пырса каяççĕ. Сăмахран, Самарти патшалăх педагогика университетĕнче ĕçлекен профессор, ăслăлăх-тĕпчевçĕ енĕпе доктор

диссертацине хӳтӗленӗ Екатерина Андреевна Ягафова пирӗн яла, КивӗТимушкелне килсен, анне патӗнче ҫӗр каҫнӑ. Пирӗн аннерен ку тӑрӑхри йӑла-йӗркесем, уявсем, юрӑсем ҫинчен нумай тӗпчесе пӗлнӗ. Вӗсем ҫӗрӗпе калаҫса ларнӑ. Екатерина Андреевна «Чуваши Урало-Поволжья» (Шупашкар 2007) тата «Чувашское язычество» (Самара 2007) ятлӑ хӑйӗн хаклӑ тӗпчев кӗнекисенче хисеп-тав туса аннен ятне те кӗртнӗ.

Эсир пӗлетӗр ӗнтӗ – пирӗн анне Левукова Ульяна Сергеевна Тутарстанри Аксу районӗнчи Кивӗ Тимушкелӗнче 1925-мӗш ҫулта ҫуралнӑ, анчах ачалӑхӗ унӑн кӳршӗ Шурьялта (Беловкӑра) иртнӗ. Чӑвашсен пӗрремӗш халӑх поэтне Николай Иванович Полоруссов – Шелепие 6-7 ҫулхи хӗрача пӗрре мар курнӑ. Килӗ умӗнчи сак ҫине тухса ларнӑ Шелепи хӑйӗн сӑввисене каланине, юррисене хавхаланса юрланине анне халь те питӗ лайӑх ас туса тӑрать, пире чун кӑмӑлтан каласа парать. Ҫамрӑк чухнех анне чӑваш халӑх юррисене питӗ юратнӑ, уйрӑмах, хӑйӗн ентешӗн Шелепин сӑвви-юррисене чунтан кӑмӑлланӑ. Паллӑ сӑвӑҫ пекех хитре сӑвӑ-юрӑсем ҫырма ӗмӗтленнӗ. Анчах, эх, анчах.. шутсӑр чухӑн пурнӑҫпа асапланса пурӑннӑран, шкулта савӑнса вӗренме те май килмен ӑна. Ҫийне ҫын умне тухмашкӑн тум уртма ҫукран, алли-урине тӑхӑнмалли пулманран, ҫанталӑкӗ хӗл енне сулӑнсанах, шкула ҫӳреме пултарайман вӑл. Ҫапла тарӑхса, тӑватӑ класс ҫех вӗренсе пӗтернӗ. Епле чунран малалла вӗренсе пӗлӳ илес килсен те, юратнӑ учителӗ, кӳршӗлле пурӑнакан Александр Николаевич Полоруссов (Шелепин ывӑлӗ), мӗнле ӳкӗтлесе йыхӑрсан та – вӑл шкула кайма пӑрахӑҫ тунӑ. Пӗччен амӑшне пулӑшас кӑмӑлпа, кӗҫӗн йӑмӑкне выҫӑ вилесрен хӑтарас шутпа, мӑн ҫынсемпе пӗр тан тӑрса, ӗҫе кӳлӗннӗ. Ҫавӑнпах пуль унӑн сӑвӑ йӗркисем те чӑнлӑхпа, чӑн пурнӑҫпа питӗ тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Хисеплӗ вулаканӑмӑрсем! Аннен чӑваш халӑх юррисем еверлӗ хайланӑ юрри-сӑввисене вуласа тухсан, тен, нумайӑшӗ сиртен хӑйӗн яш-ҫамрӑклӑхне аса илӗ, хӑйӗн хальхи пурнӑҫне ун шӑпипе танлаштарса, шухӑша кайӗ... Апла пулсан, аннен кӑмӑлӗ тулӗ, тивӗҫӗ пурнӑҫланчӗ тесе шутлӗ вӑл. Енчен те хӑш-пӗр тӗлте хӑвӑр пӗлекен, палланӑ сӑвӑ-юрӑ ҫаврӑмӗсене курас-тӑвас пулсан, аннеҫӗме каҫарӑр, тархасшӑн.

Владимир Левуков



Ульяна ЛЕВУКОВА

## ПУРНĂÇ ЮРРИСЕМ

Иккĕях курница хире-хирĕç,
Кăвакарчăн çукран илем çук.
Аçу-аннӳ çурчĕ, сунтăх пек çурт,
Пĕччен пурăннипе, ай, илем çук.
Ачасем килте çукран илем çук.

Çӳллелле те пăхрăм, эп тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем картипе иртнинчен.
Шухăшласа илтĕм те, эп тĕлĕнтĕм
Ватă пуçăм пĕччен килнинчен.

Анкарти хыҫĕнче ҫерем ҫинчен
Шăнкăртатса юхать юр шывĕ.
Пур шухăша пурне те шухăшласан,
Шăпăртатса юхать куҫҫулĕм.

Шурă Атăл хĕрринче шурă йĕтĕн.
Кăвак Атăл хĕрринче кăвак йĕтĕн.
Тăхăр ача ҫуратса, саккăрăшне ӳстерсе,
Пĕччен тăрса юласси, ах тур, хĕн.

Лăпкă кăна лăпкă шур юр ҫăвать,
Улăхсенĕн ҫине шуратать.
Сакăр ача ҫинче пĕччен юлсан,
Юн пек хĕрлĕ сăн та шуралать.

Хура вăрман урлă каҫнă чухне
Хура утҫăм ҫинче ҫĕр каҫрăм.
Ҫуртăмра тăрса юлсан пĕччен,
Уткаласа ҫӳресе ҫĕр каҫрăм.

Хура вăрман урлă каҫнă чухне
Хура ҫĕмĕрт татрăм ал ҫине.
Ҫуртăмра тăрса юлсан пĕччен,
Вĕри куҫҫуль тăкрăм ҫĕр ҫине.

Уйăх кăна пĕччен, уйăх пĕччен –
Пĕччен мар, ҫумĕнче ҫăлтăр пур.
Эпĕ кăна пĕччен, эпĕ пĕччен –
Пĕччен мар эп, ҫӳлте Турă пур.
Турă пăрахмасан, кунҫул пур.

Ан авкалан, утҫăм, ан хуҫкалан,
Эс тухас ҫук турта хушшинчен.
Ан макăр-ха, чунăм, ан йĕр, чунăм,
Эс иртес ҫук Турă ҫырнинчен.

Çӳллӗ тусем çинче чул юпа.
Чул юпа тăрринче сар çурта.
Çуртисем те çунаç, çӗре тăкăнаç,
Хӗрлӗ тилӗ куçне курăнмаç.
Эпӗех те макăрни, эпӗ йӗни
Ман ачамсем куçне курăнмасть.

Атăлпала тинӗс хум çапнă чух
Кулянать-ши акăшӗ чӗппишӗн?
Анне пӗччен тесе ас илнӗ чух
Кулянаççӗ-ши маншăн ачамсем?
Кулянаççӗ те пуль, кулянмаççӗ те пуль
Хăйсен савнă ачисем умӗнче,
Хăйсен савнă мăшăрӗсем çумӗнче.

Хура чӗкеç вӗçет, çӳле каять.
Пит çӳле кайиччен курса юл.
Пирӗн тăван каять пит аякка.
Аякка кайиччен курса юл.

Тарăн шывӗ юхать, ай, пăтранса,
Сар хăмăшӗ юлать тайăлса.
Эсӗрех каятăр, ай, ал тытса,
Ман пӗччен пуç юлать кулянса.

Салантăр вӗт, ачамсем, ай, салантăр –
Тухса кайнă çулăрсем çăмăл мар.
Ӗмӗрӗн те сакки, ай, сарлака –
Пӗччен ӗмӗр ирттерме çăмăл мар.

Аллăмра аллă хут, ай, ал çыххи,
Тататăп, тиретӗп, çыхатăп.
Ватă пуçа йывăр, ай, килсессӗн,
Ларатăп, макратăп, тӳсетӗп.

Ăмăрткайăк йăва, ай, çавăрнă
Çӳллĕ тусем-сăртсем хушшинче.
Мана атте-анне, ай, çуратнă
Нушапала хуйхă хушшинче.

Вăрманти те кайăк, уртăш кайăк
Вăрман тикĕс мартан кулянать.
Манăн ватă пуçăм ма хурланать?
Пĕччен килте юлнишĕн хурланать.
Ачасем килте çуккишĕн кулянать.

Кăвак кăвакарчăн вĕçнĕ чухне
Ик çуначĕ юлать каялла.
Эпир шухăшлатпăр, ай, малалла.
Ĕмĕрсем иртеççĕ каялла.

Пăхăр халĕ чĕкеç çунаттине –
Йĕс хачă унки пек хайрăлать.
Пăхăр халĕ Туррăн, ай, çыруне –
Савнă тăвансенчен те уйăрать.
Хам çуратнă ачамсенчен те уйăрать.

Хурама та пĕкĕ, йĕсункă
Çурма çула çитсен хуçăлчĕ.
Эпирех ярăнса ӳснĕ чухне
Саманисем йывăр, ай, пулчĕç.

Акрăм кăна йĕтĕн, акăнмарĕ.
Ай-хай пар ӳснине тупмарĕ.
Эпирех ярăнса ӳснĕ чухне
Пĕртте ырлăх курса пулмарĕ.

Çавал хăви – масмак, ай, çулçисем
Саралнăçем ӳкеççĕ таталса.
Эпир выляс-кулас яш ĕмĕрсем
Куллен кунах пыраççĕ каталса.



Ч-48808
Национальная библиотека
Чувашской Республики

Атăл шывĕ юхать авăнса,
Çыранĕсем юлаççĕ катăлса.
Пир(ĕ)н тăвансем каяççĕ пуç тайса,
Эпирех юлатпăр ал сулса.
Ман пĕччен пуç юлать макăрса.

Ян-ян янăрать Тимушкел урамĕ.
Тухас килет урам ешернĕ чух.
Чун-чĕрери хавас, ай, юррăма
Юрлас килет тăвансем килнĕ чух.

Лăпкă кăна лăпкă, ай, юр çăвать –
Тытаймарăм ывăçăм туличчен.
Килтĕр те, тăвансем, ак, каятăр –
Къраймарăм куçăм тăраниччен.

Акрăм кăна тулă, пачĕ Турă.
Хăмăлĕнчен сайра пуç тутă.
Пур тăвансем пурте пуçтарăнсан,
Ĕçмесĕр-çимесĕр эп тутă.

Кăвакарчăн чĕппине вĕçтернĕ чух
Пулчĕ аслатиллĕ çумăрĕ.
Эпирех те хĕр-пуçăн çамрăк чух
Пулчĕ саманисен йывăрĕ.

Чăкеçсем вĕçсе, ай, кайсассăн,
Чăвĕлтетсе юлаççĕ чĕпписем.
Ачамсем «Сыв пул!» тесе ал тытсассăн,
Шăпăртатса юхать куççулĕм.

Кĕмĕлех те çĕрĕ, çыруллă куç,
Тăхăнаймарăм çыравĕ пĕтиччен.
Ай-хаях, ачамсем, тăванăмсем,
Килĕр-çӳрĕр эпĕ çĕре кĕриччен.

Эпĕ леш тĕнчене, ай, куçсассăн,
Килес-çӳрес тесен те, килеймĕр.
Манăн пӳртĕм умне, ай, пырсассăн,
Манăн пĕве шыраса тупаймăр.

Крымăски çĕлĕк, кăтра çĕлĕк.
Курсан, курĕç пуянсен пусĕнче.
Каçхине выртсан, тĕлĕк курсан,
Курсан, курăр мана тĕлĕкре.

Ухуна ывăтсан, çӳль ан ывăт,
Унăн ункисене çухатăн.
Аçупа аннĕре хыт ан калăр –
Ылтăн пек пуçăра çухатăр.

Хура вăрман хĕрне юр хунă –
Ашаймаççĕ, ай, тур учĕсем.
Ашайман утăма аштараймăн.
Турă çырман ырлăха, ай, кураймăн.

Анне, мана ыран ир ан вăрат –
Хамах тăрăп хĕвел тухсассăн.
Ачамсем, эсир маншăн ан макăрăр –
Хамах тӳсĕп йывăр пулсассăн.

Уйăхăн та çути çутă тесе,
Урăрсене урлă ан пусăр.
Хамăр кăна лайăх, ырă тесе,
Çынна сивĕ сăмах ан калăр.

Чĕнтĕрлĕ те кĕпер, юман кашта
Авăнать те пулĕ – ут сисмест.
Айванах та пуçăм, ватă чунăм
Хурланать те пулĕ – çын сисмест.

Кисрен кăна, кĕпер, силлен, кĕпер,
Таканлă ут каçса кайиччен.
Савăнăр, ачамсем, выльăр-кулăр
Çамрăк пуçăр ватта юличчен.
Çамрăк пуçăр ватта юлсассăн,
Выляс-ташлас тесен те çӳреймĕр.

Сулăна-сулăна утă çултăм,
Паккусĕсем пулчĕç пилĕкрен.
Хам çулнă паккуса хам пухмасан,
Çулнă вăйăм сая каймĕ-ши?
Хам çуратнă ачамсем хама пăхмасан,
Ӳстернĕ вăйăм сая каймĕ-ши?

Тăхăр пиртен кĕрĕк эп çĕлетрĕм.
Вуннăран çĕлетме шухăш пур.
Турăпала пӳлĕхçĕ пăрахмасан,
Ĕмĕр пĕрле пурăнма шухăш пур.

Чӳрече умĕнчи куссуй çинче
Симĕс пурçăн тутри хут çинче.
Унăн тĕс кайнипе кайманнине
Пӳрне вĕçпех тытса пĕлетĕп.
Эсир савассипе савманнине
Ик куçăртан пăхсах пĕлетĕп.

Утланă утăма чараймасăр
Çеçен хире виççĕ çаврăнтăм.
Çунакан чĕрене тӳсеймесĕр
Аслă урампа виççĕ çаврăнтăм.

Хура вăрман хĕрри пит пилешлĕ –
Çиеймерĕм шăлăм шаничченн.
Эс – уйăхччĕ, тăванăм, эп – хĕвелччĕ –
Курайма рăм куçăм тăраниччен.

Ишет кăна пăлан, ишет пăлан
Мăйракине шывран илмесĕр.
Кĕтрĕм кăна, тăван, кĕтрĕм, тăван,
Чĕречерен куçа илмесĕр.

Атăлĕсем тулли, ейӳ кайнă.
Кĕрĕ-ши, кĕмĕ-ши çырана?
Айванах та пуçăм, çамрăк чунăм,
Кĕрĕ-ши, кĕмĕ-ши çын шутне?

Хура вăрман çинче хура пĕлĕт,
Тата мĕн çăвасси юлчĕ-ши?
Айванах та пуçăм, ватă чунăм,
Тата мĕн курасси юлчĕ-ши?

Сăмаварĕ вĕрет, сăмавар вĕрет –
Чей курăкне ярсан чăрăнать.
Ăшăм кăна çунать, ăшăм çунать –
Сире курса калаçсан, лăпланать.

Ăшăм кăна çунать, ăшăм çунать.
Çулăм тухни çынна курăнмасть.
Çулăм тухни çынна курăнсассăн,
Кунăн ăшĕ çунать-çке тейĕччĕç.

Вăрман урлă каçнă чух шăхăрса каç –
Вăрман кайăк юлтăр савăнса.
Тăванăр патне кайсан, юрласа яр –
Тăванăрсем тăччăр савăнса.

Анатри армансем пулман пулсан,
Çиеймĕттĕм сĕлĕ тинкĕли.
Çакăнта тăвансем пулман пулсан,
Килеймĕттĕм эпĕ çак киле.
Курaймăттăм эпĕ çак чыса.

Тăхăр пиртен кĕрĕк эп çĕлетрĕм,
Тăхăрвунă пĕрме пĕртертĕм.
Тăхăрвунă пĕрме саланас пулсан,
Тухать ман кĕрĕк чыслăхран.
Кунтан эсир мана пăрахас пулсан,
Тухать ватă пуçăм çынлăхран.

Ирхине те тăтăм эп ирĕксĕр,
Пит-куçăма çурăм супăньсĕр.
Уйрăласах тесе шутламанччĕ –
Турă уйăрчĕ пуль ирĕксĕр.

Вуниккĕлле явнă чĕн нухайккă,
Мĕншĕн сӳтĕлмелле явнă-ши?
Тăхăр ача çуратса, саккăр ӳстерсе,
Пĕччен юлма Турă çырчĕ-шим?

Ирхине те тăман, каç та тăман.
Мĕншĕн чарăнмасть-ши ку тăман?
Ирхине те асра, каç тĕлĕкре –
Мĕншĕн асран каймасть-ши ку тăван?

Пĕчĕккĕ те лаша, шурă лаша
Чăмăртанса юртса çул илет.
Айванах та пуçăм, çамрăк чунăм
Шухăшла-шухăшла ăс илет.

Сакăр утпа кайрăм эп Самара.
Пиллĕкĕшне тиерĕм пан улми.
Пан улмине сутса париш турăм –
Чыса тăхăнма атă туянтăм.
Вăл атăсем мана чысран чыса,
Эпир атте-аннене хăналăха.

Ачамсем, манӑн эсир, ачамсем,
Пурте эсир маншӑн хӑналӑха.
Килетӗр те инҫетрен, каятӑр.
Эсир килни маншӑн сывлӑха.

Сак айӗнче сакӑр ҫӑмарта –
Сарӑхрӗ пуль тесе шухӑшлап.
Мӗн курмарӗ ман пуҫ, мӗн илтмерӗ –
Турӑ ҫырчӗ пуль тесе шухӑшлап.

Шурӑ юр ҫине ҫунӑ ҫут ялтӑркка –
Хӗртсе хӗвел пӑхсан та ирӗлмест.
Сирӗн кӑмӑлӑрсем мӗнле-тӗр те –
Ман кӑмӑлӑм сиртен сивӗнмест.

Тавай, хура сурӑх пусар-и?
Тӳшне хуран кукли тӑвар-и?
Мӗн виличчен пӗрле пурӑнар-и?
Вилсен пуҫлӑ-вӗҫлӗ выртар-и?

Вӑрманти те йывӑҫ, ай, мӗн тӗрлӗ?
Ҫулҫисем те ешӗл ҫав тӗрлӗ.
Пирӗн ҫак тӑвансем, ай, мӗн тӗрлӗ?
Пирӗн те пуласчӗ ҫав тӗрлӗ.

Эпӗ вӗҫсе ӳкӗттӗм – ҫунатӑм ҫук.
Ларса пӗр канӑттӑм – турат ҫук.
Ӑшӑм ҫуннӑ вӑхӑтра калаҫӑттӑм –
Хампа пӗр канашлӑ ҫыннӑм ҫук.
Хуть пӗр ачам та ялта ҫук.

Кӗске кӑна тумтир, кӗмӗл тӳме.
Юр ан ҫутӑр, тӑванӑм, ху ҫине.
Ӑҫта ҫӳресен те лайӑх ҫӳре,
Сӑмах ан ил, тӑванӑм, ху ҫине.

Çӳлте иккен çĕлĕк, ай, пăтисем.
Вăл пăтара çĕлĕкĕ çук иккен.
Инçе иккен пирĕн, ай, тăвансем –
Курас килсен те курма çук иккен.

Çӳрен утсем юртаççĕ, ай, ыткăнса,
Чĕн йĕвенĕ пырать туртăнса.
Пур ачамсем пĕрле пуçтарăнсан,
Чун-чĕреçĕм тăрать савăнса.

Анаталла анма аван иккен,
Тăвалла хăпарма хĕн иккен.
Çемьепе пурăнма аван иккен.
Пĕччен тăрса юлсан хĕн иккен.

Хурăн шывне юхтарсан, ай, юхтарсан,
Шур хурăнĕ хурланать, хурланать.
Çак юррăма юрласан, ай, юрласан,
Манăн чунăм хурланать, хурланать.

Ан авăт-ха, куккук, кайран авăт –
Халь авăнать йывăçĕ, авăнать.
Ан макăр-ха, тăван, кайран макăр –
Халь макăрсан, ман чунăм хурланать.

Хурама пĕкĕ авăнать, ай, авăнать.
Авăнма мар, хуçăлĕ, ай, хуçăлĕ.
Кунта, тăвансем, эпĕ, ай, çук пулсан,
Курасăр та килĕ-ха, ай, килĕ-ха.

Ураçисем ука, куми пурçăн –
Виçмесĕрех кĕпе, ан касăр.
Эсир урăх çĕре, ай, кайнăшăн,
Пире манчĕç тесе, ан калăр.

Ураçисем ука, куми пурçăн –
Виçмесĕрех кĕпе ан касăр.
Эпĕ леш тĕнчене, ай, куçсассăн,
Мана асăнмасăр ан çийĕр.

Хăмăш кăна кашлать, хăмăш кашлать.
Хăмăш хушшисенчен шухă çил вĕрет.
Чĕлхеçĕм калаçать, тутам кулать.
Эс сисес çук, тăван, пуçăм шав кĕрлет.

Тĕттĕмĕн-тĕттĕмĕн, ай, курăнать –
Çитрĕмĕр-шим вăрман хĕррине.
Ялан уйрăлассăм, ай, туйăнать –
Çитетĕп-шим уйрăлас кунсене.

Кайăк хурсем каяççĕ, ай, картипе.
Кайри мала тесе ан калăр.
Эпирех килтĕмĕр, ай, каятпăр.
Кайни лайăх тесе ан калăр.
Эпĕ леш тĕнчене, ай, куçсассăн,
Вилни лайăх тесе ан калăр.

Хураях тăхăнар, хура çыхар
Хурланса çӳренĕ вăхăтра.
Юрлама мар, тăвансем, йĕрсе ярап
Эсир аса килнĕ вăхăтра.

Хĕрлĕ тилĕ юртать уй-хир урлă
Хăва тункатисене шыраса.
Эпирех килтĕмĕр ял-ял урлă
Хамăр тăвансене шыраса.

Хам утăма йĕвен тăхăнтартсан,
Утçăм пуçне уха пуçларĕ.
Ура çине тăрса юр пуçласан,
Тăван куçне шăлма пуçларĕ.

Хыҫри анкартинче кантăр акрăм,
Ҫумăр ҫуманнипе шăвартăм.
Кĕтрĕм кăна, тăван, кĕтрĕм, тăван,
Хăвăр пыманнипе хам ҫитрĕм.

Кăмаки те пĕчĕккĕ, вутти чĕрĕ.
Епле ҫунтарам-ши вуттине?
Саманисем йывăр, парăм нумай –
Епле ирттерем-ши ку ĕмре?

Лапри анкартисен, ай, хыҫĕнчен
Нумай утсем утрĕҫ йĕнерсĕр.
Ҫуртăмра тăр пĕччен тăрса юлсан,
Пур шухăша пурне те шухăшласа,
Нумай каҫсем иртрĕҫ ыйхăсăр.

Ҫĕмĕрт йывăҫĕ ҫемҫен авăнать,
Чечек ларсан, шăрши сарăлать.
Манăн вată чун пĕрмай кулянать.
Ачамсене курсан, савăнать.

Патиян йывăҫҫин техĕмĕ
Пĕтĕм аслă улăха сарăлнă.
Манăн ачамсен лайăх ячĕсем
Мĕнпур Хусан уесне сарăлнă.

Ула иккен сирĕн утăрсем –
Улпутран улăштарса илтĕр-им?
Сирĕнех те чĕлхĕрсем питĕ ҫемҫе –
Чĕкеҫрен улăштарса илтĕр-им?

Сада килсе ларчĕ сарă кайăк.
Тата хăҫан килсе ларĕ-ши?
Килтĕр ĕнтĕ, ачамсем, ман патăма.
Тата хăҫан килсе курăр-ши?

Аслăях та улăх, ай, варринче
Вăйлăях та кăвар йăлкăшать.
Çавăях та кăвар, ай, варринче
Манăн чунăм çунса кĕл пулать.

Санпа ман хушăра хура вăрман –
Витĕр утса тухма сукмак çук.
Санпа ман хушăра тĕпсĕр çырма –
Урлă каçса кайма кĕпер çук.

Каçса курăр вăрман леш енне –
Ним пулмин те, кантăрăн пусси пур.
Килсе курăр манăн патăма –
Ним пулмин те, тăварпа çăкăр пур.

Акăшĕсем шурă, йăви – мамăк.
Кӳлли ăшăк тесе калас мар.
Тăванĕсем лайăх, чĕлхи çемçе.
Кулли япăх тесе калас мар.

Куккукран та мĕскĕн кайăк çук,
Чĕппине кăларма йăви çук.
Чунран ăшă сăмах калаçăттăм –
Хампа пĕр канашлă çыннăм çук.

Çыртарас мар терĕм шурă хут çине –
Çыртарсан та, вула пĕлес çук.
Ӳстерес мар терĕм çинçе пĕвĕме –
Ӳстерсен те, ырлăх курас çук.

Пӳрнеллĕ перчетке, ула кунçа
Çĕтĕлсен те – тĕсĕ каймарĕ.
Хамăнах та савнă сарă ачи
Сивĕнсен те – асран каймарĕ.

Кĕмĕл çĕрĕ патăм, тăхăнтăн-и?
Ăшĕ çырулляччĕ, вуларăн-и?
Эп çырăва пĕлес çук, эс вулас çук.
Иксĕмĕре Турă çырас çук.

Чĕрече умĕнче улма йывăç.
Куçа илĕртекен улми пур.
Эпĕ урампала иртнĕ чухне,
Ăмсанса юлакан çынсем пур.

Тăххăрăн çăпата сырас пулсан,
Аршăн-аршăн ярса пусăттăм.
Хам савни хамах пулас пулсан,
Икĕ çул мар, ĕмĕр кĕтĕттĕм.

Çыхмастăп та писев, ай, тутрăма
Пите писев сăнĕ сапмасан.
Калаçмастăп та çав ял каччипе
Хампала пĕр мăшăр пулмасан.

Юрт-юрт кăна, утçăм, юрт, утçăм,
Çурхи çулсем çӳле тухиччен.
Савăнар-ха, тăвансем, выляр-кулар,
Çамрăк пуçсем ватта юличчен.

Татрăм кăна хухă, татрăм кĕпçе,
Çӳль ту çине ларса майларăм.
Аттепеле аннен пехилĕхне
Шур пир тăрăх ăшĕнче усрарăм.

Шурăях та пӳртĕн кăмакине
Шурата пĕлменнипе сăрларăм.
Çак тăвансем патне, ай, килсессĕн,
Калаçа пĕлменнипе юрларăм.

Сĕтел ҫине сарнă сĕтел ҫиттин
Утмăл-ҫитмĕл тĕслĕ ҫӳҫи пур.
Ҫак тăвансем патне, ай, килсессĕн,
Утмăл-ҫитмĕл тĕслĕ чыссем пур.

Ҫыхмăттăмччĕ ҫӳҫеллĕ шур тутрăма –
Ҫӳҫисем пусараҫҫĕ ҫӳҫĕме.
Юрламăттăм эпĕ ҫак юррăма,
Юрăҫăм пусарать чĕреме.

Вĕҫтертĕм, вĕҫтертĕм шур тутрăма,
Вĕҫсе ӳкрĕ Чистай хулине.
Ҫав Чистай хулинче мĕн хаклă?
Пире кирлĕ тăвар пит хаклă.
Сирĕн пек ҫамрăкра мĕн хаклă?
Ҫав выляса-кулни пит хаклă.

Лутра кăна хурăн хур пулмĕ.
Хурăн шывĕсенчен те пыл пулмĕ.
Йĕрсе кăна, хуйхăрса, ай, тăрар мар –
Хуйхăран чĕресенче ҫу пулмĕ.

Шурă пӳртсем умне шăлса тытăр
Мамăк калпаксемпе выляма.
Вĕренсе юлăр, ачамсем, ҫак юрра
Эпĕ асăра килсен юрлама.

2011-мĕш ҫулчен ҫырса пыни

Владимир ЛЕВУКОВ

## АННЕ ЮРЛАКАН ЮРĂСЕМ

Мана питĕ килĕшеççĕ анне юрлакан юрăсем. Тăванлăхпа хăна юррисем, юратупа çутçанталăк пулăмне сăнарланă юрăсем... Анне юрлама тытăнсан, итленеçемĕн итлес килетчĕ, сасси уçă та янравлă унăн, вара чăтса тăраймастăмччĕ – купăса алла илеттĕмччĕ те, самант кĕвĕ-çеммине вĕренсе, унпа пĕрле юрлама тытăнаттăмччĕ. Тăван ене хамăр ушкăнпа концерт лартма кайнă чухне, яланах аннепе иксĕмĕр пĕр-икĕ юрă юрласа параттăмăрччĕ сцена çинчен. Хулари концертсенче, фольклор фестивалĕсенче тăтăшах аннерен вĕреннĕ юрăсене юрлатпăр мăшăрăмпа. Тольяттири «Шанчăк» ятлă чăваш халăх ансамблĕн репертуарĕнче те темиçе юрă пур. 1999 – мĕш çулта, эпĕ те çак ансамблĕн йышăнче пулнăскер, Чăваш Республикин кунне палăртма Шупашкара кайнăччĕ. Хамăр енчи «Шинлă урапа» ятлă юрăпа чăвашсен тĕп хулинче, «Атăлçи çăлкуçĕсем» фестивальре, Хĕрлĕ лапамри чи пысăк уçă сцена çине юрлама тухнăччĕ. Ĕмĕр асăнмалăх самантсем.

## ШИНЛĂ УРАПА

Мĕн калаçар, т(ă)вансем, мĕн пуплешер?
Йӳçĕ ĕçсе тутлăн калаçар.
Х.ю. Шинлĕ урапа, шинлĕ урапа –
Пылчăк çыпăçмасть.
Çемçе чĕлхерен
Тăван сивĕнмест.

Йӳçĕ ĕçсе, тутлăн калаççассăн,
Кусем пĕр тăвансем темĕç-ши?
Х.ю.
Урамăрсем аслă, çуртăр çӳлĕ –
Вĕçен кайăк вĕçсе каçас çук.
Х.ю.
Чĕлхĕр сирĕн çемçе, хăвăр лайăх –
Тем чул çын сивĕтсе – сивнес çук.
Х.ю.
Нумай улăх тăрăх, ай, çӳрерĕм –
Кĕрепенке хăмла тупмарăм.
Х.ю.
Нумай хăна тăрăх, ай, çӳрерĕм –
Хамăр т(ă)ван пек ыр çын тупмарăм.
Х.ю.

## ЫЛТӐНПАЛА КӖМӖЛ МӖНШӖН ХАКЛӐ

Ылтӑнпала кӗмӗл мӗншӗн хаклӑ?

Мӑскал ҫине хурса виҫнӗрен. 2 хут

Пирӗн ҫак тӑвансем мӗншӗн хаклӑ?

Мӗн кӗҫӗнрен пӗрле ӳснӗрен. 2 хут

Ылтӑн-кӗмӗл лайӑх тыткалама.

Пурҫӑн тумтир ҫемҫе тӑхӑнма. 2 хут

Айван пуҫӑмпала шухӑшласан,

Хамӑр тӑван лайӑх пурӑнма. 2 хут

Кӑвак кӑвакарчӑн хам пулам-и?

Карлӑк ҫине ларса юрлам-и? 2 хут

Сирӗн савнӑ т(ӑ)ванӑр хам пулам-и?

Сирӗн ума тӑрса юрлам-и? 2 хут

Сӗтел ҫине сарнӑ сӗтел ҫитти

Мӗнле хӗҫ кӗрӗпе тӗртнӗ-ши? 2 хут

Пире ҫак т(ӑ)вансемпе ӗҫсе-ҫиме

Мӗнле Турӑ ларса ҫырнӑ-ши? 2 хут

## АЯКРА АСЛАТИСЕМ

Аякра аслатисем,
Ай, илтĕнеç.
Кĕлтĕр-кĕлтĕр сасăсем,
Кĕлтĕр-кĕлтĕр сасăсем
Илтĕнеç.

Ан йĕр халĕ, пуçăм, та
Ан йĕр, чунăм,
Турă парас сасăсем,
Турă парас сасăсем
Илтĕнеç.

Аякра вут çутисем,
Ай, курăнаç.
Тимĕр арчан тăпсисем,
Тимĕр арчан тăпсисем
Мар-ши вăл?

Аякра çын сассисем,
Ай, илтĕнеç.
Хамăр т(ă)вансен сассисем,
Хамăр т(ă)вансен сассисем
Мар-ши вăл?

Ай-хай, кăвакарать те,
Ай, ешерет.
Хăш пуянăн ешĕл те,
Хăш пуянăн ешĕл те
Уçăмĕ-ши?

Ай-хай, авкаланать те
Хуçкаланать.
Хăш пуянăн кĕçĕн те,
Хăш пуянăн кĕçĕн те
Ывăлĕ-ши?

Çӳлĕ тусем çинче те
Шурă кĕлет.
Уçса кĕрес терĕм те,
Уçса кĕрес терĕм те
Çилсĕр кун.

Ай, аттеçĕм, тетĕп те,
Ай, аннеçĕм,
Килсе курас, терĕм те,
Килсе курас, терĕм те
Ĕçсĕр кун.

## УЛМА ЙЫВĂÇ

Улма йывăç силленет те
Улми çĕре тăканать.
Савни аса килсессĕн те
Куççуль çĕре тăканать.

Х.ю. Аслă çула тухсассăн та
Хам та пĕлеп тусанне.
Хам та пĕлеп, хам та сисеп
Çамрăк ĕмĕр иртнине.

Аслă çулăн мĕн илемĕ
Ешĕл курăк шăтмасан.
Çамрăк чухне мĕн илемĕ
Юрату та пулмасан.

Х.ю.

Улма йывăççи çинче те
Пĕр улми юлнă халĕ.
Аса килсен тытса курма
Ал тутри юлнă халĕ.

Х.ю.

Улма йывăç касма мар та –
Кассасăн та вутта мар.
Ют ял ачи выляма мар –
Вылясан та пурăнма мар.

Х.ю.

## АЙ-ЯЙ, ЛАЙĂХ ХĂНАРА

Улма йывăççийĕн сăнĕ кайнă –
Чечекĕсем çĕре тăкăннă.

Х.ю. Ай-яй, лайăх хăнара!
Тулли курка алăра.
Çавăнпа та манăн чунăм
Питĕ савăнать.

Хам тăвана курсан ăсăм кайрĕ –
Хаклă йышши пустав тăхăннă.

Х.ю.

Хаклă йышши пустав пасарта çук.
Пирĕн тăван пекки ялта та çук.

Х.ю.

Сан çийăнти, тăван, кĕпе тĕрри
Ман кĕпе тĕрри пек курăнать.

Х.ю.

Сан кăмăлă, тăван, ай, епле-ши,
Ман кăмăл санни пек туйăнать.

Х.ю.

## КАШЛАТЬ ВĂРМАН

Шурăмпуçпа çунă шурă юрĕ
Тилĕ хăвалама кăпăш юр.
Х.ю. Кашлать вăрман,
Ешерет кăлкан.
Мĕнле пурăнать-ши
Аякри тăван?

Айван пуçăмпала шухăшласан
Пĕрле пурăнмашкăн кăмăл пур.
Х.ю.

Кăвакалĕ ула, мăйĕ хăла.
Хăш кукăрта ишсе çӳрет-ши?
Х.ю.

Хамăрах та савнă, ай, тăванăм
Хăш хулара утса çӳрет-ши?
Хăш хулара утса, ай, çӳрет-ши,
Хăш хула илемне кӳрет-ши?
Х.ю.

Пӳрнеллĕ перчетке, симĕс кунча,
Çĕтĕлсен те тĕсĕ каймарĕ.
Х.ю.

Ай-хаях та лайăх хамăр тăван
Сивĕнсен те асран каймарĕ.
Х.ю.

## ÇУРКУННЕХИ КУНĔНЧЕ

Çуркуннехи кунĕнче,
Çуркуннехи кунĕнче, кунĕнче
Ир тăмашкăн пĕлмеççĕ, пĕлмеççĕ.
Çакăн пек лайăх пурнăçпа,
Çакăн пек лайăх пурнăçпа, пурнăçпа
Ыр курмашкăн пĕлмеççĕ, пĕлмеççĕ.

Хурăн шывне юхтарсан,
Хурăн шывне юхтарсан, юхтарсан,
Шурă хурăн хурланать, хурланать.
Çак юррăма юрласан,
Çак юррăма юрласан, юрласан,
Манăн чунăм лăпланать, лăпланать.

Хурама пĕкĕ авăнать,
Хурама пĕкĕ авăнать, авăнать –
Авăнма мар, хуçăлĕ-ха, хуçăлĕ-ха.
Эпир кунтан кайсассăн,
Эпир кунтан кайсассăн, кайсассăн,
Курассăр та килĕ-ха, килĕ-ха.

## ЫР УЛПУТ ПЕК ТĂВАНСЕМ

Çунаçăм, çунаçăм, ай, çулçă пек,
Ик ÿречи çÿхе шăвăç пек.
Тăвансем, тăвансем ыр улпут пек,
Икĕ пичĕ хĕрлĕ улма пек.

Сад пахчи алăкĕ уçă тăрать.
Кĕретĕр, тухатăр, хупмастăр.
Юрататăп, тетĕр, савап, тетĕр.
Иртетĕр, çÿретĕр, кĕместĕр.

Чистайри купсасем мĕн ĕçлеççĕ?
Ăсчут туртса укçа шутлаççĕ.
Пирĕн çак тăвансем мĕн ĕçлеççĕ?!
Юрла-юрла ĕçкĕ ĕçеççĕ.

Вĕлтĕр кăна вĕлтĕр йĕтĕн тутри
Çатан çинче вĕçни илемлĕ.
Тутлă ăсла туса, хăмла ярса,
Юрла-юрла ĕçни илемлĕ.

## АЛЛĂМРИ КĔМĔЛ ÇĔРĔ

Хурама та пĕкĕ, ай, йĕс ункă
Авăнать те пулĕ – ут сисмест.
Х.ю. Аллăмри кĕмĕл çĕрĕ
Кăвак тĕслĕ мар-ши вăл?

Айванах та пуçăм, çамрăк чунăм
Кулянать те пулĕ – çын сисмест.
Х.ю.

Ан авкалан, утçăм, ан хуçкалан.
Эс тухас çук турта хушшинчен.
Х.ю.

Ан кулян-ха, пуçăм, çамрăк чунăм,
Эс иртес çук Турă çырнинчен.
Х.ю.

Уттарар, чуптарар çӳремешкĕн –
Пирĕн кӳлнĕ утсем начар мар.
Х.ю.

Хурланса, кулянса çӳремешкĕн –
Пирĕн çак тăвансем начар мар.
Х.ю.

Хурама та пĕкĕ, ай, йĕс ункă,
Чăнкăртатать туртса кӳлнĕ чух.
Х.ю.

Çак тăвансем патне, ай, килсессĕн,
Чун хурланать тухса кайнă чух.
Х.ю.

## ИЛЕМЛĔ, ИЛЕМЛĔ

Юратап, юратап,

Эп шур тутăр юратап.

Çакă ялăн ачине

Эп тахçанах юратап.

Х.ю. Илемлĕ, илемлĕ,

Илемлĕ чăваш кĕпи.

Илемлĕ чăваш кĕпи

Тăхăна пĕлсен кăна.

Илемлĕ, илемлĕ,

Илемлĕ çамрăк ĕмĕр.

Илемлĕ çамрăк ĕмĕр

Пурăна пĕлсен кăна.

Урам урлă каçмашкăн

Калуш çутă пулмарĕ.

Çак ачипе калаçма

Сăнăм хитре пулмарĕ.

Х.ю.

Савни сарри те пулать,

Савни хури те пулать.

Сарри-хури хушшинче

Турă çырни те пулать.

Х.ю.

## АННЕ, МАНА ИРЕХ АН ВĂРАТ

Анне, мана ыран ирех ан вăрат –

Хамах тăрăп хĕвел тухсассăн. 2 хут

Анне, эсĕ маншăн питех ан макăр –

Хамах тӳсĕп йывăр пулсассăн. 2хут

Чĕпĕте-чепĕте пушă та яврăм.

Ялан хам лашана çапасшăн. 2 хут

Шухăшла-шухăшла юрă юрларăм –

Ялан хам тăвана юрасшăн. 2 хут

Мамăк пек, мамăк пек шурă юр çăвать –

Кам парĕ-ши пире хупăлча? 2 хут

Атте-анне панă ăссем те пĕтсен,

Кам парĕ-ши пире урăх ăс? 2 хут

## Т(Ă)ВАТКĂЛ ÇЕРЕМ ÇĂЛКУÇĔ

Т(ă)ваткăл çерем çăлкуçĕ, çăлкуçĕ.
Т(ă)ваткăл çерем çăлкуçĕ.
Ăссах тăрăр, ан типтĕр, ан типтĕр.
Ăссах тăрăр, ан типтĕр.

Ах, тăвансем, тăвансем, тăвансем.
Ах, тăвансем, тăвансем.
Килсех çўрĕр, ан сивнĕр, ан сивнĕр.
Килсех çўрĕр, ан сивнĕр.

Ут талпăнать, талпăнать, талпăнать.
Ут талпăнать, талпăнать.
Такăр çула тухасшăн, тухасшăн.
Такăр çула тухасшăн.

Манăн куçăм тĕмсĕлет, тĕмсĕлет.
Манăн куçăм тĕмсĕлет.
Хам тăвана курасшăн, курасшăн.
Хам тăвана курасшăн.

Урнă тăман çул шăлать, çул шăлать.

Урнă тăман çул шăлать.

Çул шăлать те юр хывать, юр хывать.

Çул шăлать те юр хывать.

Тăван черкки пĕчĕк черкке, пĕчĕк черкке.

Тăван черкки пĕчĕк черкке.

Ăс пăсать те сăн юсать, сăн юсать.

Ăс пăсать те сăн юсать.

## МЕДЯНКА ЮРРИ

(Кивĕ Тимушкелĕнчи «Уяв» ятлă чăваш халăх ансамблĕ юрлать. Илемлĕх ертӳçи Тутарстан тата Чăваш Республикисен тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Аркадий Алексеевич Харитонов)

Француз тутăр пĕтмест, теççĕ,

Пĕтет иккен çыхсассăн.

Çамрăк ĕмĕр иртмест, теççĕ,

Иртет иккен пурăнсан.

Х.ю. Каçпа тĕттĕм, кайма хăрап.

Атя, савни, ăсатса яр.

Каçпа теттĕм тенине,

Кайма хăрап тенине,

Ăнланатни, савнă тусăм,

Пыр эс манпа тенине.

Анаталла анмалла та,

Тăвалла хăпармалла.

Пĕрне-пĕри юратса та

Малалла пурăнмалла.

Х.ю.

Утсан утма пултарап та,

Чупсан чупма пултарап.

Çакă вăййа тухсассăн та

Юрлама та пултарап.

Х.ю.

Владимир Левуков

## УЯВ ЮРРИСЕМ

Епле илемлӗ уяв юррисем! Янравлӑ та хурлӑхлӑ та. Ҫуллахи Микула кунӗнчен пуҫласа куккук авӑтма тытӑнать, яшкӗрӗм чӑваш ялӗсенче уяв тума тухать. Мӗн Питрав кунӗ ҫитиччен, хӗвел каҫ енне сулӑнсанах, уяв юррисем юрлама пуҫлатчӗҫ пирӗн ялта. Эпӗ астӑвасса, иртнӗ ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенче (вуннӑра пулнӑ-ха эпӗ ун чухне), питӗ хӑватлӑ иртетчӗҫ уяв каҫӗсем. Хӗрсем-каччӑсем алӑ-аларан тытса тем пысӑккӑш уяв карти туса утатчӗҫ, ача-пӑча хӗвӗшсе ункӑ ӑшне, тулашне кӗретчӗ-тухатчӗ. Ватти-вӗтти, ҫамрӑксем, ҫулланнисем уяв пуҫлама е курма пуҫтарӑнатчӗҫ ял варринче. Чӑннипех те, уяв чӑваш халӑхӗшӗн ҫулталӑка яхӑн пӗр чӑтӑмсӑр кӗтнӗ пысӑк праҫник пулнӑ. Ҫавӑнпах пуль мӗнпур праҫнике ҫулталӑк тапхӑрне пӑхмасӑр (паллӑ кун, юбилей-и, юрӑ-ташӑ фестивалӗ-и тата ыт.те) хальхи чӑвашсем, уйрӑмах пичетре, «уяв турӑмӑр», теҫҫӗ. Ун пек калани тӗрӗсех-ши? Хуравӗ иккӗлле.

Иртнӗ ӗмӗрӗн юлашки ҫулӗсенче, чӑвашсем пӗрле пухӑнса наципе культура пӗрлешӗвӗсем йӗркелеме тытӑннӑ хыҫҫӑн чӑвашсен авалхи ытти праҫникӗсемпе пӗрле (ҫӑварни, акатуй, чӳклеме, кӗр сӑри, кӑшарни...) уяв та ҫӗнӗрен чӗрӗлме пуҫларӗ. Пирӗн ялта, Тутарстанри Аксу районӗн Кивӗ Тимушкел ялӗнче маларах та. Ку енӗпе ҫак ялта 40 ҫул каяллах йӗркеленсе, сцена ҫине тухнӑ «Уяв» ятлӑ чӑваш халӑх фольклор ансамблӗн пайти питӗ пысӑк. Илемлӗх ертӳҫи Аркадий Алексеевич Харитонов, ӑна тӗрев парса, хавхалантарса тӑракан мӑшӑрӗ Нина Федотовна Харитонова, ушкӑнра юрлакансем Валентина Васильевна Рыжакова тата ыттисем те пӗр тӗллевлӗ пулса, пӗрчӗн-пӗрчӗн пухаҫҫӗ уяв юррисене, ансамбльпе юрлама пуҫлаҫҫӗ, Хусан, Ульяновск, Шупашкар хулисем таринех Кивӗ Тимушкел уявне илсе ҫитереҫҫӗ.

Кашни чăваш ялěнче хăйне уяв юррисен самахěсем те, кěвви те, ташши те. Эпě вара сире, хисеплě вулаканăмăрсем, Тутарстанри Аксу районěнчи Кивě Тимушкелěнче юрлакан хăш-пěр уяв юррисемпе паллаштарасшăн. Паллах, пур уяв юррисене кунта кěртнě тесе калаймастăп, калама та пултараймастăп, мěншěн тесессěн самана улшăнса пынă майăн уяв юррисем те улшăнса пынă, хăш-пěри манăçа тухнă. Нумайăшне анне юрласа панисене çырса илнě, вырăнти «Уяв» ансамбль юрланисем те пайтах, ялта уяв ирттернě чухне çырса пынисем те пур.

## АНКАРТИНЧЕ САР ЧЕЧЕК

(уяв пуçланă чухне юрламалли)

Анкартинче сар чечек. 2хут

Кěрсе татăр, ачисем. 2 хут

Сар чечек пек уява 2хут

Кěрсе юрлăр, хěрěсем. 2 хут

Чашки-чашки çěр çырли

Пěр пухмасăр пулмасть вăл.

Юр пуçласа юрласси

Начар хěртен пулмасть вăл.

Улма йывăç умĕнче

Ут кăкарни илемлĕ.

Аслă урам варринче

Уяв туни илемлĕ.

Çил арманне пураççĕ,

Тулăх тырă ÿсиччен.

Хĕрсем хĕрсе юрлаççĕ

Уяв кунĕ çитнĕрен.

## ШЫВ-ШЫВ ТУЛЛИ

Шыв-шыв тулли, шыв тулли. 2 хут

Х.ю. Калина моя, малина моя. 2 хут

Çыранĕ епле чăтать-ши? 2 хут

Х.ю.

Куçăм курман пулсан та 2 хут

Х.ю.

Чĕрем епле чăтать-ши? 2 хут

Х.ю.

Ан ишĕл, ҫыран, ан ишĕл 2 хут

Х.ю.

Эпир каҫса кайиччен. 2 хут

Х.ю.

Ан авланăр, ачисем, 2 хут

Х.ю.

Эпир ӳссе ҫитиччен. 2 хут

Х.ю.

## ВУНИК КУККУК

Вуник куккук, пĕр карăш 2 хут

Пĕр карăш, пĕр карăш авăтаҫҫĕ пĕр харăс. 2 хут

Пухăнсамăр, тантăшсем, 2 хут

Тантăшсем, тантăшсем, атьăр юрлар пĕр харăс. 2 хут

Урамăрсем такăр мар. 2 хут

Такăр мар, такăр мар, такăрлатма эпир мар. 2 хут

Каяп, каяп, тееҫҫĕ. 2 хут

Тееҫҫĕ, тееҫҫĕ, каяканни эпир мар. 2 хут

Манӑн ҫӗрӗ кӗмӗл мар. 2 хут

Кӗмӗл мар, кӗмӗл мар, ҫав(ӑ)нпа сыппи татӑлать. 2 хут

Ман шухӑшӑм пысӑк мар. 2 хут

Пысӑк мар, пысӑк мар, ҫав(ӑ)нпа савни сивӗнет. 2 хут

Улма чечек илемлӗ. 2 хут

Илемлӗ, илемлӗ, шур юр пекех туйӑнать. 2 хут

Уяв кӑшӑлӗ илемлӗ. 2 хут

Илемлӗ, илемлӗ, ҫав(ӑ)нпа чунӑм савӑнать. 2 хут

## ЧУПА-ЧУПА, АЙ, ЧУЛ ПУХРӐМ

(кӗпер туса ташламалли)

Чупа-чупа, ай, чул пухрӑм. 2 хут
Мунча чулне юрӗ-ши? 2 хут
Мунча чулне юрамасан, 2 хут
Кир пуканне юрӗ-ши? 2 хут

Ҫак уява, ай, тухсассӑн, 2 хут
Мӗнле юрӑ юрлам-ши? 2 хут
Пирӗн ялӑн, ай, ачисем 2 хут
Сарӑ хӗре юрӗҫ-ши? 2 хут

Кĕр суханне, ай, касмăттăм – 2 хут

Çиес килни пĕтерет. 2 хут

Çак уява, ай, тухсассăн, 2 хут

Юрлас килни пĕтерет. 2 хут

Чашки-чашки, ай, çĕр çырли 2 хут

Татрăм çиес килнĕрен. 2 хут

Сар чечек пек çак уява 2 хут

Тухрăм юрлас килнĕрен. 2 хут

Тăнкки-танкки, ай, ан пусăр – 2 хут

Çĕр кисренет, ачисем. 2 хут

Хĕр куçĕнчен, ай, ан пăхăр – 2 хут

Хĕр вăтанать, ачисем. 2 хут

Чупа-чупа, ай, чул пухрăм. 2 хут

Мунча чулне юрĕ-ши? 2 хут

Çак уява, ай, тухсассăн, 2 хут

Мĕнле юрă юрлам-ши? 2 хут

## КĂВАКАЛĔ ЧĂМАТЬ-И

(Хӳхӳрнӳ  ...)

Юханшыв юхса пырать.

Кăвакал чăмса пырать.

Х.ю. Кăвакалĕ чăмать-и?

Чăмсан калле тухать-и?

Веселитса тумасăрах

Ĕмĕрĕм иртсе пырать.

Х.ю.

И, шыв юхать, шыв юхать

Унталла та кунталла.

Х.ю.

Шывпа юхса кайăттăмччĕ –

Шыв та юхмасть унталла.

Х.ю.

Шурă тутăр çӳçине

Тĕплĕн тума вĕрентĕм.

Х.ю.

Сухапуçне пăрахса

Тĕплĕн тытма вĕрентĕм.

Х.ю.

Çак вăрмана кайсассăн,

Кун иртнине сисмерĕм.

Х.ю.

Çак уява кĕрсессĕн,

Каç иртнине сисмерĕм.

Х.ю.

## АН ТУХ, ШАПА, ШЫВ ХĔРНЕ

(уяв вĕçленес кунсенче юрламалли)

Ан тух, шапа, шыв хĕрне, 2 хут

Тăрă шыва пăтратса. 2 хут

Ан кай, савни, леш касса, 2 хут

Ман чĕрене çунтарса. 2 хут

Сурăхсем хытă макраççĕ. 2 хут

Элле кĕтӳ кĕрет-ши? 2 хут

Хĕрсем мĕскĕн юрлаççĕ. 2 хут

Элле уяв иртет-ши? 2 хут

Пĕррехинче, ялта уяв пынă вăхăтра ман пата пĕр ытарми маттуртан та маттур хĕр пычĕ. «Каçарăр та, эпĕ Сире çырса хатĕрленĕ хамăр ялта юрлакан уяв юррисене парасшăн. Тен, кирлĕ пулĕ, кирлĕ кунта», - терĕ кăштах пуçне пĕксе. Ун çине пăхрăм та тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм: епле хÿхĕм хĕрсем ÿссе çитĕнеççĕ иккен пирĕн ялта? Турех хамăн «Сĕнче кĕтесĕ» поэмăри йĕркесем аса килчĕç:

Хĕрĕсем те Тимушкелĕн

Илĕртеç манăçтарсах.

Тĕл пулсан, куçна илеймĕн –

Евчĕ ярăн çав каçах.

Ах,Турăçăм, теме те ĕлкĕреймерĕм – ман умри хĕр пăнчă пек çухалчĕ уяв картинче. Ятне те ыйтса пĕлме тавçăраймарăм, тетрадь листи çинче те ним те палăртман. Чăнах та, «кирлĕ пулчĕç, кирлĕ кунта» çак хĕр-ентешĕмĕн çырса панă уяв юррин сăмахĕсем. Тавтапуç! Пĕр улăштармасăрах, хăш-пĕр ярăмсем маларах тĕл пулчĕç пулсан та, пĕр сиктермесĕрех вăл çырнине Сире те вулама сĕнесшĕн.

**«Уяв пуçланă каç юрламалли» тесе çырнă**

Хирте çиччĕн çÿреççĕ

Çил арманне пураса.

Çил арманне пурасан,

Ыраш пулать тееççĕ.

Кăçал ыраш пит ăннă –

Машинапа çапмаллла.

Кăçал кайнă хĕрсене

Ăраскалпа çапмалла.

Чашки-чашки çĕр çырли –

Пĕр пухмасăр пулмасть вăл.

Юр пуçласа юрласси

Начар хĕртен пулмасть вăл.

Анатран пĕлĕт хăпарать,

Кăвакарать, шуралать.

Пире курайман çыннисем

Пĕр хĕрелеç, шуралаç.

Ĕнтĕ пахча илемлĕ,

Шур купăста пуç хушсан.

Ĕнтĕ хĕрсем илемлĕ,

Шурă тутăр çыхсассăн.

Ан тух, шапа, шыв хěрне,

Тăрă шыва пăтратса.

Ан кай, савни, леш касса,

Ман чěрене çунтарса.

Пилеш пиçнě вăхăтра

Йывăççи йăтса лараймасть.

Эпир ÿснě вăхăтра

Тăшман чăтса тăраймасть.

Хуххи, хуххи, хур хуххи

Хăçан урама шăтни пур.

Пирěн ялăн хěрěсем

Хăçан уява тухни пур.

Леш айккине юр çунă,

Ку айккине мěн пулнă?

Пěлтěр эпир мěнлеччě?

Кăçал пире мěн пулнă?

Шыв-шыв тулли, шыв тулли –
Ҫыранӗ епле чӑтать-ши?
Куҫӑр курса, чун савса,
Чӗрӗр апле тӳсет-ши?

Чӑмӑр, чӑмӑр шывалла,
Шыв сирпӗнсе тӑмалла.
Ӳсӗр, ӳсӗр хӗр пулса,
Ҫын тӗлӗнсе тӑмалла.

Улма йывӑҫ ут юпи –
Ут кӑкарни илемлӗ.
Аслӑ урам варринче
Уяв туни илемлӗ.

Анкартинчи сар чечек –
Кӗрсе татӑр, ачисем.
Сар чечек пек уява
Кӗрсе юрлӑр, хӗрӗсем.

Ҫичӗ те пилӗк сар курка
Пирӗн алра вылянать.
Ҫинҫе пӳллӗ сар ача
Пирӗн умра вылянать.

Пӳлмери сӗлӗ ма сикет?
Кӗмӗл укҫа сиктерет.
Уяври хӗрсем ма сикеҫ?
Ҫамрӑк ӗмӗр сиктерет.

Вӗт-вӗт куҫлӑ улача
Мӗншӗн шултра курӑнать-ши?
Ҫинҫе пӳллӗ сар ача
Мӗншӗн салху тӑрать-ши?

Вӗтти-вӗтти вӗлтӗрен –
Ун вӗттине кам пӗлмест.
Ҫинҫе пӳллӗ сар ача –
Ун вӗҫкӗнне кам пӗлмест.

Сурăхсем хытă макраççĕ –

Элле кĕтӳ кĕрет-ши?

Хĕрсем хытă юрлаççĕ –

Элле уяв иртет-ши?

**ТУЙ ЮРРИ**

(Аксу районĕнчи Кивĕ Тимушкелĕнче (Тутарстан) аннепе Трубкина Екатерина (Кăттьа аппа) юрласа панине çырса илнĕ)

Çĕртиях та патша, çӳлти Турă,

Пире ирĕк парсамăрччĕ туй тума.

Атьăрах та каяр та, ай Лайăша.
Лайăша та мар-ха – тупăша.

Эпĕ тупăш туса килнĕ çĕре

Çак тăвансем тăраççĕ савăнса.

Çакă кăна туя та çакă туя,
Тавай, çĕклентерер-и çак туя.

Эх, туя кăна та, çак туя,

Тавай, хурлантарар-и леш туя.

Ачамăрах чипер те, ай, Ванюк пур,

Хĕрсемĕртен лайăх та Марье пур.

Марье кинĕм тени те вĕлт çаврăнтăр,

Кунне виççĕ яшкасем пĕçертĕр.

Кунне виççĕ яшкасем пĕçермесен,

Пирĕн Ванюк аллинче нухайкка.

Нухайккипе çапĕ те юн сирпĕтĕ, 2 хут икĕ йĕркине те

Сăмахĕпе калĕ те макăртĕ.

Суранĕсем пырĕç те, ай, виç куна, 2 хут икĕ йĕркине те

Сăмахĕсем пырĕç те ĕмĕре.

Атя киле, йăмăк та, атя киле –

Элле çичĕ юта та юлатни?

Çичĕ ютăн çăкрисем, ай, çич çăкăр –

Çыртмассерен шăлусем хайрăлĕç.

Аттепеле аннемĕн виçĕ çăкăр –

Çыртмассерен тутусем çуланĕç.

Эх, пахча кăна пахча та, шур купăста –

Çулçисене татмасан пуç пулмĕ.

Эпĕрех те ватă та, эсĕр çамрăк – 2 хут икĕ йĕркине те

Сире пуç таймасан та чыс пулмĕ.

## ÇĂВАРНИ ЮРРИ

(Тутарстанри Аксу районĕнчи Кивĕ Тимушкелĕнче тата çывăхри чăваш ялĕсенче юрлаççĕ)

Шур куяна курсан, салам калăр –

Ан кăшлатăр ăвăс хуппине.

Ан кăшлатăр ăвăс та хуппине.

Ман савнине курсан, салам калăр –

Ан вылятăр урăх хĕрсемпе.

Ан вылятăр урăх та хĕрсемпе.

Эпир çăварнисем чупнă чухне

Сулăнкисем юлччăр сылтăма.

Сулăнкисем юлччăр та сылтăма.

Вĕçтертĕм, вĕçтертĕм шур тутрăма –

Вĕçсе юлчĕ Тимушкел урамне.

Вĕçсе юлчĕ Тимушкел те урамне.

Çунаçăм, çунаçăм, ай, çулçă пек,

Ик ÿречи çÿхе шăвăç пек.

Ик ÿречи çÿхе те шăвăç пек.

Савниçĕм, савниçĕм ыр улпут пек.

Икĕ пичĕ хĕрлĕ чие пек,

Икĕ пичĕ хĕрлĕ те чие пек.

Юрттармашкăн юрттак, ай, пулинччĕ,

Çÿремешкĕн çÿрен ут пулинччĕ.

Çÿремешкĕн çÿрен ут та пулинччĕ.

Выляма та кулма, ĕçсе-çиме

Çамрăк ĕмĕр вăрăм пулинччĕ.

Çамрăк ĕмĕр вăрăм та пулинччĕ.

Хыçалта та тимĕр, малта тимĕр –

Çĕмĕреймĕç пирĕн çунана.

Çĕмĕреймĕç пирĕн те çунана.

Куçĕсемех кăвак, çÿçĕ сарă –

Сивĕтеймĕç пирĕн савнине.

Сивĕтеймĕç пирĕн те савнине.

## ЭХ, АННЕ

Кулленхи ĕçсемпе путланса,
Вак-тĕвекшĕн пуçа шуратса,
Пурнăçри чи-чи çывăх çынпа,
Эх, анне, курнăçма çук санпа.

Калаçассăм килет савăнса,
Ыталассăм килет кăмăлтан.
Ĕç чăрмавĕ çине ал сулса,
Çитрĕмех сан патна эп паян.

Ик-виç уйăх курманччĕ сана
Хум саспа çеç пуплешнĕ кăштах.
Самаях шур тĕс çапнă сăнна,
Эс каларăш,„шур тутăр çыхсах."

«Хĕрĕм тутлă апат хатĕрлет,
Анчах темшĕн çиме ман витмест.
Пуçăмра тăтăш трактăр кĕрлет,
Сывламашкăн та сывлăш çитмест», -

Айăпа кĕнĕ пек калаçан
Ху çуратнă атьсем умĕнче.
Ӳпкелес çук сана нихăçан –
Эс – анне! Чи хакли çĕр çинче!

Тăхăрвунă çул урлă каçса,
Мĕн курман-ши эс çак пурнăçра?
Тав Турра, вăл тăрать вăй парса,
Çут тĕнче ырлăхне кăтартса.

Хĕн-хурне ытларах курнăран,
Тен, сана вăрăм ĕмĕр кӳрет.
Эх, анне, эс ларатăн çумра –
Савăнать, хумханать ман чĕре.

30.11. 2016

## Тупмалли

**Владимир Левуков.** Умсăмах.........................................3

**Ульяна Левукова.** Сăвă ярăмĕсем.........................................7

**Ульяна Левукова.** Пурнăç юррисем. Умсăмахĕ В. Левуковăн... 14

**Владимир Левуков.** Анне юрлакан юрăсем.........................................30

**Владимир Левуков.** Уяв юррисем. Туй юрри. Çăварни юрри... 45

**Владимир Левуков.** ЭХ, АННЕ.........................................62

Литературно-художественное издание

**Ульяна Левукова**

**Владимир Левуков**

# С ПЕСНЕЙ ПО ЖИЗНИ

Книга издана в авторской редакции.

Фото обложки - Н.А. Гавриловой

Фото в книге – З.В. Левуковой и автора

Подписано в печать 30.11.2016 г.
Печать оперативная. Усл. печ. л. – 4,0.
Тираж – 200 экз. Заказ № 1130.
Отпечатано ООО ТИПОГРАФИЕЙ «ФОРУМ»
445009, Самарская обл., г. Тольятти, ул. Радищева, 12.

75.2

